# «Унӑн поэзийӗ ирхи сывлӑм пек таса»

## (К 75-летию со дня рождения)

## ИРХИ (ПОРФИРЬЕВ) ГЕОРГИЙ ИВАНОВИЧ



(01.02.1949-26.06.2010)

**Поэт, журналист, член Союза писателей Российской Федерации (1994), заслуженный деятель Музыкального общества Чувашии, лауреат премии им. А. Талвира.**

Родился в д. Самуково (Самоккасси) Чебоксарского района Чувашской Республики.

Георгий Ирхи - выпускник Чувашского государственного университета им. И.Н Ульянова. Работал актером Чувашского театра кукол. Свыше 30 лет трудился редактором, старшим редактором литературно-драматических передач Чувашской телерадиокомпании. Переводил произведения А. Перевозчикова, Л. Кутякова, С. Комбу, Л. Исаевой на чувашский язык. На его стихи создано более пятидесяти песен, такие как: «Юрларӗ шӑпчӑк» (А. Асламас), «Чечекӗм, кӗл чечек» (Н. Эриванов), «Çырмари хӗвел» (И. Степанов), «Савнӑ пулӗ эсӗ...» (Ю. Кудаков) и др.

Автор поэтических сборников: «Тасалу» (Очищение), «Çырмари хӗвел» (Солнышко в речке), «Вӑтанчӑк аслати» (Робкий гром). Новые произведения периодически публиковал на страницах журналов «Ялав» и «Çилçунат».










## Аякран килсен ăш çумăр

Аякран килсен ăш çумăр,
Аслатийĕ кĕрлесен,
Хăрамасăр утрăн çуммăн
Урама илем кӳрсе.

Сунчăк карăнчĕ пуç çийĕн...
Çул çинчи кӳлленчĕксем—
Çук иккен! — Пăхмарĕç сиввĕн,
Иртнĕ майăн ик этем.

Аслати те мăкăртатрĕ,
Кĕр! кĕрлерĕ те — самант
Пĕлĕт тăрăх тăкăртатрĕ
Урапи леш урама.

...Çак ӳкерчĕк тухрĕ чĕррĕн
Ас илсессĕн çав куна
Сан та эрешленĕ тĕрĕ —
Евитленĕ самана.

## Çĕнĕ кун

Асамлăх пур вăраннă кунăн:
Йыхравласа тĕнче хĕрне
Хĕвел хевте хушать халь чунăн
Кашни-кашни тĕпренчĕкне.

Мана эс вăратан хĕвел пек,
Шевле пек сĕртĕнсе питрен...
Сисетĕп: нихăçан кĕвелмĕ
Хĕвелĕм иккĕ чух — чĕре!

## Пӗрремӗш юр

Ытарлă шăплăх... Систермесĕр
Çĕрле именчĕк юр çусан
Кукша пуçсем тăман вĕçтернĕн
Туйса чупас килет çарран.
Çакна сисет кушак çури те...
Анчах малтан, хăй еккипе,
Юра асăрхануллăн питĕ
Тĕксе пăхать вăл тяппипе.

## Палăк

Эп — чĕмсĕр-чĕмсĕр палăк...
Аваллăх йĕресем
Эрешлĕ те хавallă —
Ĕмĕтпелен сыв мар.

Эп — сивĕ-сивĕ палăк...
Васкавсăр ĕмĕрсем
Тăхăмсене, тен, калĕç:
«Этем вăл — чуллăх мар...»

## Çеçпĕл: юлашки каç

Манми тăванăмсем, каçарăр,
Манми чун варлисем, каçарăр, —
Каятăп тапрăнми.

Сас пулчĕ тăвăнчăк, каçарăр,
Çул пулчĕ пăрăнчăк, каçарăр, —
Каятăп таврăнми.

Айван çуратнăшăн каçарăр,
Çынна юратнăшăн каçарăр, —
Каятăп таврăнми.

Хаяр сунманшăн та каçарăр,
Пуйма çунманшăн та каçарăр, —
Каятăп таврăнми.

Савса ĕлкĕреймен, каçарăр,
Çырса ĕлкĕреймен, каçарăр, —
Каятăп таврăнми...

*Библиография:*

1. Айдаш, Ю. Хӑйне шыракан поэт / Ю. Айдаш // Тӑван Атӑл. – 1991. – № 1. – С. 50.

2. Андреев, С. Унӑн поэзийӗ ирхи сывлӑм пек таса / С. Андреев // Ҫамрӑксен хаҫачӗ. – 2009. – 16 юпа (№ 41). – С. 4.

3. Владимирова, Е. Поэзи «картинче» – 30 ҫул / Е. Владимирова // Хыпар. – 1997. – 13 ака.

4. [Георгий Ирхи ҫинчен] // Капкӑн. – 2009. – № 3. – С. 21.

5. Сӑвӑра – сӑнарлӑхпа тасалӑх... // Ялав. – 1999. – № 3-4. – С. 59.

6. Ҫӑлкуҫ, П. Ирхи, кӑнтӑрлахи салам... : Георгий Ирхине / П. Ҫӑлкуҫ // Капкӑн. – 2009. – № 7. – С. 19.

7. Тимаков, В. Кашни тӗпренчӗкре – ӑнкарайми тӗнче / В. Тимаков // Чӑваш ен. – 1999. – 13-20 нарӑс (№ 6). – С. 5.

8. Унӑн ячӗ – асӑмӑрта // Тӑван ен (Шупашкар р-нӗ). – 2009. – 1 раштав. – С. 2.

9. Афанасьев, П. Ирхи (Порфирьев) Георгий Иванович // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 177.

10. Ирхи (Порфирьев) Георгий Иванович // Энциклопедия Чебоксарского района. – Чебоксары, 2014. – Т. 1. – 2014. – С. 193.

11. Колесниченко, О. Поющая поэзия Ирхи / О. Колесниченко // Чебоксар. новости. – 1996. – 12 апр.

12. Порфирьев Георгий Иванович (Ирхи) // Энциклопедия чувашской журналистики и печати. – Чебоксары, 2014. – С. 347-348.

13. Станьял, В. П. Ирхи (Порфирьев) Георгий Иванович / В. П. Станьял // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2008. – Т. 2 : Ж-Л. – С. 150.

14. Ялгир, П. Ирхи (Порфирьев) Георгий Иванович // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С. 44-45.